КУЛЬТУРА

• *Пултарулăх*

Уçă саслă хӳхĕм хĕр

Элĕк районĕнчи Кĕçĕн Тăван ялĕнчи Таня Иванова аслă аппăшĕпе Дашăпа пĕрле ашшĕ-амăшĕ тата Александр Архипов учитель пилленипе пуçламăш классенче вĕреннĕ чухнех ачасен концерчĕсене хутшăнма пуçланă. Ялти клубăн е шкул коридорĕн пĕчĕк сценисем çинче вĕсем шăрантарнă «Чей-чей, чей чашки», «Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт» тата ытти юрăсене ватти те, вĕтти те тăвăллăн алă çупса йышăннă. Ахальтен мар вун ултă çулти Таня ялти шкул директорĕ З.М.Иванов сĕннипе Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищине вĕренме килет.

Уçă саслă, яштака та хӳхĕм хĕр кунта вĕренме пуçласанах кӳршĕллĕ Вăрнар районĕнчи Маша Елановăпа туслашать. Унтанпа çирĕм çул та иртрĕ ĕнтĕ, анчах та тантăшсене паян та час-часах пĕрле курма пулать. Музыка училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн иккĕшĕ те вокал ăсталăхне Чулхулари М.И.Глинка ячĕллĕ патшалăх консерваторийĕнче ӳстернĕ. 1996 çултанпа Т.Сергеева-Иванова Раççей Федерацийĕн халăх артисчĕ М.Н.Яклашкин ертсе пыракан Чăваш патшалăх академи симфони капеллинче юрлать, М.Еланова вара – оперăпа балет театрĕн солистки. Çĕнĕ ĕмĕрте Татьянăпа Мария чăваш халăхĕ юратакан, кăмăллакан артисчĕсем пулса тăчĕç.

– Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче эпĕ те Чулхулари консерваторире пĕлӳ илнĕ. Çавăнтанпа унта час-часах пулатăп. Татьяна мĕнле юрланине ĕлĕкрех те савăнса итлеттĕм, халь вара унпа мухтанатăп та. Пирĕн капеллăра вăл – тĕп сопрано. Татьяна Сергеева хутшăнмасăр пĕр концерт та иртттерме май килмест, – тет Морис Николаевич Яклашкин.

Кĕçĕн Тăванти вăтам шкулта е Шупашкарти музыка училищинче вĕреннĕ чухне Татьянăн репертуарĕнче, тĕпрен илсен, чăваш композиторĕсен тата халăх юррисем ытларах пулнă. Консерваторире вара вăл вырăссен, çавăн пекех тĕнчери чи паллă композиторсен хайлавĕсене,

ытларах романссене юрлама хăнăхрĕ. Юлашки вунă çулта Кĕçĕн Тăван шăпчăкĕ Мускавра, Санкт-Петербургра, çавăн пекех чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенче академи капелли иртернĕ 600 ытла концерта хутшăннă. Татьяна Августовна – вырăс романсĕн Пĕтĕм тĕнчери «Шурă акаци» фестивалĕн лауреачĕ.

Унăн репертуарĕнче юлашки çулсенче чăваш юррисемпе пĕрле П.Чайковскин, С.Рахманиновăн, М.Глинкăн, А.Алябьевăн, Н.Римский-Корсаковăн, çавăн пекех итальянсен классикĕсен Гаэтана Доницеттипе Джузеппе Вердин тата мухтавлă Вольфганг Моцартăн романсĕсемпе опереттисенчи арисем паллă вырăн йышăнаççĕ.

■ **Петр СИДОРОВ**

• *Шухăш*

«Тĕнче ытамĕ сарлака»

Кам пĕлмест пулĕ Аркадий Петрович Казанова!.. Мана унăн «Ватă йăмра вилĕмĕ» кĕнеки кăсăклантарать. Паян чăваш писателĕсенчен кунашкал тарăн философиллĕ, чуна, ăс-шухăша, кăмăл-сипете хумхантаракан произведени çыракан сахалрах.

Иртнĕ çул Аркадий Петрович «Тĕнче ытамĕ сарлака» кĕнеке кăларчĕ. Ку – çыравçăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăввисен пуххи. Вăл висĕ пайран тăрать: «Тӳпе тулли çиçет хĕвел...», «Пире ан тутăр халăхăм ӳпкев...», «Чунтан-вартан сума суса». Пĕрремĕшĕнчи сăвăсем, юрату темипе çырнăскерсем, вулакана тӳрех тыткăна илеççĕ. «Çурхи каç», «Манăçа тухман çулсемшĕн», «Çил ваш турĕ», «Ялан умраччĕ ун сăнарĕ», «Яш вăхăт», «Мĕнле пурăнатăн?», «Кăмăл», «Савни», «Атăл хумĕ», «Çамрăклăх çуначĕ», «Чун», «Ай, ан васкăр сивлеме...», «Ăçта-ши халĕ çавă сутă?», «Вĕсем телейлĕ иккĕнех», «Çивĕт» тата ытти те кĕнĕ унта.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче, тĕпрен илсен, публицистика хайлавĕсем.

Аркадий Казанов çыравçа, журналиста, поэта хисеплесе, ырă сунса, чун ăшшине палăртса, пултарулăхне пуç тайса çырас терĕм çак йĕркесене. Ыттине вара вулакан хăй куртăр, шухăшлатăр, савăнтăр, тĕлĕнтĕр.

■ **Егор ВАСИЛЬЕВ-БУРЗУЙ**

• *Эсир ыйтнипе*



Пулăпăр-ха пĕрле

Кĕввипе сăмахĕ **Николай КАРЛИНĂН**

Юр тăкăнать, юр тăкăнать
Ял-хуласем çине.
Эпĕ ялта, эс хулара
Çак хĕллехи каçхине...

Хушса юрламалли:
Сивĕ хĕл каçĕ,
Сивĕ хĕл каçĕ
Сивĕтеймест пире.
Эс юратсассăн,
Эп юратсассăн
Пулăпăр-ха пĕрле.

Çил çаврăнать, çил
çаврăнать,
Тупаяс çук вĕçне.
Эс те пĕччен, эп те
пĕччен
Çак хĕллехи каçхине.

Хушса юрламалли
Эп саншăнах, эс
маншăнах
Килнĕ пуль çĕр çине.
Кĕçĕр кăна туйрăм çавна
Çак хĕллехи каçхине.

Хушса юрламалли
Вăхăт иртет, вăхăт шăвать,
Вăхăт пĕлет ĕçне.
Чăн юрату – çав ăшăтать
Çак хĕллехи каçхине.

Хушса юрламалли

• *Аваллăх çӳпçи*

Евгения ЖАЧЕВА

Чăваш эрешĕн çĕввисем

/Малалли. Пуçламăшĕ 2010 çулхи 4-11-мĕш кăларăмсенче/.

18. ТАН-ТАН ТĔРĔ. */18 ӳкер./*

Сулахайран сылтăмалла тĕрлемелле. Çипе пиччĕн енне кăларатпăр /1/. Сылтăмалла 6 çип шутласа илетпĕр те йĕппе тиркетпĕр /2/, тӳнтер енчен 1 çип çӳлелле илсе йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр /3/. Унтан сулахаялла тата 6 çип илсе йĕппе тиретпĕр /4/, тӳнтер енчен 1 çип çӳлелле



тата сылтăмалла 3 çип шутласа йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр /5/. Халĕ пĕр мăшăр горизонталлĕ йĕр пулчĕ. Унтан иккĕмĕш мăшăр йĕре пĕрремĕш тăрринче /иккĕмĕш йĕрĕ пĕрремĕш йĕрĕн çуррине пуçланать/ çĕлетпĕр, виççĕмĕш мăшăр вара иккĕмĕш тăррине çурринчен пуçланать. Çапла майпа ӳкерчĕк пĕтиччен тĕрлетпĕр.

19. ВĔТ ХАНТĂС. */19 ӳкер./*

Ку çĕвве сулахайран сылтăмалла тĕрлемелле. Яланхи пекех çипе пиччĕн енне кăларатпăр /1/. Сылтăмалла 4 çип илсе йĕппе тӳнтер енне тиретпĕр /2/ те, 1 çип çӳлелле тата 2 çип сулахаялла илсе йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр /3/. Унтан сулахаялла 2 çип шутлатпăр та горизонталлĕ йĕрпе иккĕллĕ чикĕм тăватпăр /4, 5/. Халĕ сылтăмалла 4 çип илсе йĕппе тӳнтер енне тиретпĕр /6/ те аялалла 1 çип тата сулахаялла 2 çип илсе йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр /7/. Сылтăмалла 4 çип шутласа йĕппе каллех тӳнтер енне тиретпĕр /8/, хальхинче çӳлелле 1 çип тата сулахаялла 2 çип илсе йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр /9/. Малалла та ӳкерчĕк çинчи пек тĕрлемелле. Пиччĕн енче тӳрĕ, пĕр-пĕрин çумне тачă çыпçăннă горизонталлĕ чикĕмсем пулса пыраççĕ, вăл паклава çĕвве аса илтерет.

Вĕт хантăс çĕввĕн уйрăмлăхĕ – шăрпăкла çĕвĕ. Ăна вертикаллĕ тĕрлемелле. Сылтăмран сулахаялла çĕлетпĕр. Çипе пиччĕн енне кăларнă /1/ хыççăн çӳлелле тӳп-тӳрĕ 2 çип шутласа йĕппе тиретпĕр /2/ те, тӳнтер енчен сулахаялла 1 çип тата çӳлелле 1 çип илсе /3/ йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр. Аялалла тӳп-тӳрĕ 2 çип шутласа йĕппе тиретпĕр те /4/ тӳнтер енчен сулахаялла 1 çип тата аялалла 1 çип илсе /5/ йĕппе пиччĕн енне кăларатпăр. Пиччĕн



енче вертикаллĕ тĕрлĕ шайра тăракан чикĕмсем пулса пыраççĕ. Ӳкерчĕк пĕтиччен çапла майпа тĕрлетпĕр. Иккĕмĕш рете урăх тĕслĕ çиппе тĕрлемелле тата пĕрремĕш чикĕме пĕрремĕш ретри иккĕмĕш чикĕм тăрринче тумалла.

Ку çĕвве тури чăвашсен хул çинче тата масмакĕнче курма пулать.

/Малалли пулать/.

• *Пĕлме интереслĕ*

Çулталăкри сезон вăхăчĕ

Ĕлĕк çулталăкри вăхăта сезонсем çине хальхи пек мар, урăхларах, çут çанталăкри улшăнусене тĕрĕсрех шута илсе пайланă.

Калăпăр, хĕл вăхăчĕ чӳк уйăхĕнчи 27-мĕш кунран пуçласа пуш уйăхĕнчи 17-мĕш кун таран 111 талăк тăсăлнă, çу кунĕсем 77 талăка çеç. Çавăн пекех кĕрпе çур та тан мар. Кашни сезон вăхăтне те, çут çанталăкри улшăнусене кура тĕрĕслетсе, кĕскерех пайсене уйăрнă. Вара çулталăк вăхăчĕсем çакăн пек уйрăлса тăнă:

Хĕлле – чӳкри 27-мĕшпе пушри 17-мĕш кунсем– 111 талăк.

1. Хĕлĕн малтанхи кунĕсем – чӳкри 27-мĕшпе раштаври 22-мĕш кунсем – 26 талăк.

2. Тĕп хĕл кунĕсем – раштаври 23-мĕшпе нарăсри 14-мĕш кунсем – 54 талăк.

3. Хĕл хусăлни – нарăсри 15-мĕшпе пушри 17-мĕш кунсем – 31 талăк.

Çуркунне – пушри 18-мĕшпе çĕртмери 10-мĕш кунсем – 85 талăк.

1. Юр ирĕлнĕ вăхăт – пушри 18-мĕшпе акари 15-мĕш кунсем – 29 талăк.

2. Çут çанталăк чĕрĕлсе хусканни – акари 16-мĕшпе çу уйăхĕнчи 6-мĕш кунсем – 21 талăк.

3. Çур хĕрсе çитни – çу уйăхĕнчи 7-мĕшпе 21-мĕш кунсем – 15 талăк.

4. Çулла пуçланас умĕнхи вăхăт – çу уйăхĕнчи 22-мĕшпе çĕртмери 10-мĕш кунсем – 20 талăк.

Çулла – çĕртмери 11-мĕшпе çурлари 26-мĕш кунсем – 77 талăк.

1. Çу кунĕсем пуçланни – çĕртмери 11-мĕшпе утăри 5-мĕш кунсем – 25 талăк.

2. Хĕрӳ çу кунĕсем – утăри 6-мĕшпе 27-мĕш кунсем – 22 талăк.

3. Çу чакни – утăри 28-мĕшпе çурлари 26-мĕш кунсем – 30 талăк.

Кĕркунне – çурлари 27-мĕшпе чӳкри 26-мĕш кунсем – 92 талăк.

1. Кĕр пуçланни – çурлари 27-мĕшпе авăнри 23-мĕш кунсем – 28 талăк.

2. Ылтăн кĕркунне – авăнри 24-мĕшпе юпа уйăхĕнчи 15-мĕш кунсем – 22 талăк.

3. Хура кĕр – юпари 16-мĕшпе 23-мĕш кунсем – 8 талăк.

4. Хĕл умĕнхи вăхăт – юпари 24-мĕшпе чӳкри 26-мĕш кунсем – 34 талăк.

Çулталăкĕпе 365 талăк.

Кăларăма Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ. • Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» КУЛЬТУРА • Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-08-61.